*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

71 (2483) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# ХРЕСЧЕН САССИ

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЭРНЕ КУН

2014,
авăн, 12

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХЪ́ТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## Коррупци валли вăрттăн çул ан юлтăр

Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çут çанталăк пуянлăхĕпе усă курмалли, хăйăр кăлармалли, ирĕк памалли аукционсен кăтартăвĕсемпе паллаштарнă. Калăпăр, Шупашкар районĕнчи Çĕктерти хăйăр карьерĕ. Аукциона 5 организаци хутшăннă, СУОР çĕнтернĕ. Çавна май бюджета самай пысăк укçа кĕрĕ. Пĕтĕмпе вара кăçал çавнашкал 10 аукцион йĕркеленĕ, çакă бюджета кӳнĕ пайта – 39,5 млн тенкĕ. Çулталăк вĕçлениччен тата 46 млн кĕмелле, пĕтĕмпе вара 86 млн тенкĕ патнеллех пулĕ.

– Лайăх кăтарту, – палăртнă ЧР Пуçлăхĕ, – çакă хăй тытăмлăх органĕсен, влаçăн ăнăçлă ĕçĕ. Аукционсенче унта хутшăнакансемшĕн пуриншĕн те пĕрешкел условисем йĕркелетпĕр. Унччен хăшĕсене çăмăллăхсем панă. Халĕ çавăнпа вĕсем кăмăлсăрланаççĕ, вĕсенчен пĕрисем саккунлă ĕçленĕ, теприсем – саккунлах мар. Массăллă информаци хатĕрĕсенче тĕрлĕрен çыраççĕ. Эпир никама та саккун нормисене пăсма памăпăр. Çут çанталăк пуянлăхĕпе усă курассине рынок механизмĕсем çине куçаратпăр. Коррупци валли вăрттăн çулсем юлмаççĕпе пĕрех.

Хăйĕн сăмахне вăл цифрăсемпе çирĕплетнĕ. 2011-2013 çулсенче 24 аукцион ирттернĕ май республика бюджетне 50 млн тенкĕ кĕнĕ. 2008-2010 çулсенче вара 16 суту-илӳ пулнă. Михаил Васильевич вĕсем пирки "çурма хупăскерсем" тенĕ, çав аукционсем бюджета пĕтĕмпе те... 1 млн тенкĕ кӳнĕ. "Чухлама кăна пулать..." – пăтравлă лару-тăрупа унччен камсем пайта курнине систерсе каланă республика Пуçлăхĕ.

Çут çанталăк ресурсĕсен министрне Иван Исаева вăл çак ĕç-пуç пирки халăха тĕрĕс информаци пама сĕннĕ. Патшалăх служащийĕсене хăшĕ-пĕри "ăнланмалла мар витĕм кӳме" тăнине палăртса унашкал пулăмсене татăклăн пӳлме хушнă. Хăйăр тĕлĕшпе ăна кăлармалли лицензие 15 организацирен туртса илнĕ. Çав шутра Шупашкар юхан шыв портĕнчен – 6 лицензи. Икшер лицензие – Тăвай "Сельхозхимийĕнчен" тата Комсомольски районĕнчи «Энергосервисран». Тата – Ишлейри кирпĕч завочĕ тĕлĕшпе: чылайранпа ĕçлемест.

## Хушма укçа çитнĕ

Агропромышленноçа аталантарма республикăна федераци бюджетĕнчен 111,2 млн тенкĕ хушма укçа килнĕ. Вăл тĕш тырă ӳстерес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç пахалăхне лайăхлатма илнĕ инвестици кредичĕсен процентне саплаштарма тата уй-хир ĕçĕнчи кăтартусене пăхмасăр хресченсене пулăшу пама каять. Паян-ыран çак укçа çĕр ĕçченĕсем патне çитмелле.

## Чăваш Енре – инçетри хăнасем

Çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнче Геннадий Айхи çыравçă пурăннă пулсан 80 çул тултаратчĕ. Юбилее халалласа авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче республикăна Айхи сăввисене тĕрлĕ халăх чĕлхине куçаракансем Великобританирен, Швеципе Норвегирен килсе çитнĕ. Вĕсем ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕпе В.В. Андреевăпа тĕл пулнă, поэтăн тăван ялне – Патăрьел районĕнчи Çĕньяла – çитсе килнĕ, ытти мероприятисене хутшăннă.



Пăрачкав тăрăхĕнче

Сăн ӳкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

**ПАЯН** кун тăршшĕ 13 сехет. Уйăх катăлать. Çак кун авăн уйăхне сăнлать. Авăн кĕр ылтăнĕ, чечексемпе çимĕçсен патши тенĕ.

**ЫРАН** – Куприян кунĕ. Кишĕр, хĕрлĕ кăшман, çĕр улми кăларнă. Тымар çимĕçе пуçтарма вăхăт. «Чипер арăм ĕне çумĕнче, чипер хĕр кишĕр ани çинче», «палан çырли тулса çитнĕ, татма йыхравлать» тенĕ. Çак кун тăрнасем ăшă енне вĕçме тытăнаççĕ, хăш çулпа каясси пирки канашлаççĕ. Ытларах чухне шăпах çак кун тӳпере карталанса вĕçнине, сасă кăларса кунти кĕтеспе сыв пуллашнине асăрхама пулать. Куприян кунĕнчен шур çырли пуçтарма тытăнаççĕ.

**ВИÇМИНЕ** – Симеон е Çемен кунĕ. Çак кун ăшă тăрсан хĕл те ăшă килмелле. Эрешмен карти нумай пулсан кĕр вăрăм та хĕвеллĕ килĕ. Кайăк хурсем кăнтăра вĕçсен хĕл ир çитмелле.

ЫЙТУ – ХУРАВ

## Хăçан лартсан аван?



**Ыхрана кĕркунне хăçан лартсан аван? Пĕрисем авăн уйăхĕн вĕçĕнче, теприсем юпа уйăхĕнче лартмалла теççĕ. Хăшĕ тĕрĕс калать-ши?**

**Мария ВЛАДИМИРОВА, Комсомольски районĕ, Хурнай.**

Кĕрхи ыхрана авăн уйăхĕн вĕçĕнче лартма тытăнаççĕ. Чи меллĕ вăхăта палăртас тесен пĕрремĕш юр хăçан çăвассине шута илмелле. Çĕр çине юр ӳкиччен ыхра лартнă хыççăн 40 кун юлмалла. Çак тапхăрта вăл лайăх тымарланма ĕлкĕрет. Раççейĕн вăтам тăрăхĕнче ыхрана ытларах авăн уйăхĕн юлашки вунă кунлăхĕнче е юпа уйăхĕн пĕрремĕш вунă кунлăхĕнче лартаççĕ.

Пирĕнтен чылайăшĕ ăна 3-5 см тарăнăшне лартма хăнăхнă. Анчах та тарăнрах (10-15 см тарăнăш) лартас пулсан вăхăтне юпа уйăхĕн çурриччenex тăсма юрать. Кĕркунне тарăн лартнă ыхра аванрах тымарланса юлать, чирлемесĕр хĕл каçать.

Уйăх календарĕ ыхрана уйăх Скорпион, Ухăçă, Сурăх паллисене кĕнĕ тапхăрта лартма сĕнет.

## Ĕне хӳрине сăнăр

**Часах ĕне пăруламалла. Калăр-ха, тархасшăн, вăкăр е тына пăру пулассине малтанах пĕлме пулать-и?**

**Светлана ИВАНОВА, Хĕрлĕ Чутай районĕ.**

Ĕлĕк ватă çынсем çакна малтанах палăртма пултарнă. Вĕсен сăмахĕ ытларах чухне тӳрре тухнă. Апла вĕсен сăнавне эсир те тĕрĕслеме пултаратăр. Ĕне хӳрине пăхмалла. Унăн çилхи вĕçĕ кăтраланнă пулсан тына пăру кĕтĕр. Хачăпа касса пĕр пеклетнĕн курăнсан вăкăр пулать.

Ĕне çиллине те сăнамалла. Пăрулас умĕн чи малтан хыçалти пайĕсем тăртансан – вăкăр, малти пайĕсем пулсан тына пăру кĕтме вăхăт.

Ĕне ял çыннишĕн пурнăç тыткăчи тетпĕр. Апла ăна тĕрĕс пăхмалла, уйрăмах пăрулас умĕн. Çак сĕнӳ-канаш сирĕншĕн усăллă пуласса шанатпăр.

✓ Пăрулас умĕн ĕнене кунне виçĕ хут апатлаççĕ. Паян пăруламалла чухне унăн апат анмасть. Çилли самай пысăкланать. Кун пек чухне вăл выртма шикленет, çавăнпа ĕне сĕтне суса илме юрать. Çакăн хыççăн ăна выртма та меллĕ, пăруланă чухне те чăрмав пулмĕ.

✓ Пăру ĕне хырăмĕнче тĕрĕс выртать пулсан пăруланă чухне 20-40 минутран тухать. Тухаймасан ĕнене пулăшмалла: пăруна урисенчен тытмалла та туртмалла.

✓ "Çулланнă" ĕнесем (6-7 хут пăруланисем) тăрсах пăрулаççĕ. Тин çеç çут тĕнчене килнĕ пăруна таса ай çи çине хураççĕ, çăварĕпе сăмсине лăймакаран тасатаççĕ те амăшне çуллама параççĕ. Çуллани çамрăк чĕр чунăн сывлав çулĕсене лайăххрах уçать, хырăмлăхне ĕçлеттерме пулăшать. Çапла майпа ĕне хыçĕ (ветеринарире планцета теççĕ) те хăвăртрах тухать.

Халăхра çапла та тунă: хуппипе пĕçернĕ икĕ (унтан ытла пулмалла мар!) пысăках мар çĕр улмине марля татăкĕпе çыхнă та ĕне хыçĕ çумне çакса янă. Çакăн пек йывăрăшпа планцета часрах аннă.

✓ Пăруланă хыççăн çур сехетрен ĕнене шыв ĕçтермелле (3 витре ăшă шыв çине 150 грамм апат тăварĕ тата 1 стакан сахăр), тăраниччен утă çитермелле. Унтан сĕтне суса пăрăва памалла. Ĕçсе ярайманнине ĕнене хăйне парсан аван.

КИРЛĔ ПУЛĔ

## Тĕрĕс упрама пĕлмелле

Кишĕре маларах хăйăр е пăчкă кĕрпи ăшĕнче упраттăм. Иртнĕ çул вара урăх мелпе усă куртăм. Малтанах çуса тасатрăм, типĕтрĕм, пуçĕсене касрăм та шурă михĕсене (сахăр миххисене) тултартăм, çыхрăм. Кишĕр нӳхрепре ака уйăхĕччен упранчĕ.

Кăшмана та миххе чикрĕм. Кăларнă хыççăн хĕвел çинче типĕтрĕм, тымарне касмарăм. Михĕ пуçне хытах çыхмарăм. Кăшмана çу уйăхĕччен упрама май пулчĕ.

Сухана нӳхрепре карçинккара тытрăм. Ун айне ăшă япала сартăм. Мĕншĕн тесен урай сивĕ. Сухан питĕ лайăх упранчĕ.

***

Кăçал пан улми ăнса пулчĕ. Ăна нӳхрепре упрама май пур. Çавна май татнă çимĕçе карçинккаран хут сарнă ешчĕксене куçармалла. Ăна сулхăна лартмалла, çĕр каçиччен сивĕнтĕр. Кăнтăр ăшши çитиччен нӳхрепе антармалла. Çапла тусан вăл чылай вăхăт упранĕ. Ешчĕксене пĕр-пĕрин çине 6-10 рет, стенаран 20 сантиметрта лартмалла. Чи аялти ешчĕк айне 5-6 сантиметр хулăнăш хăма е кирпĕч хумалла: пан улми аялтан вĕрекен сывлăшпа уçăлма пултартăр. Нӳхрепре çĕр улми е кăшман тытатăр тăк пан улми валли унта вырăн çук – çимĕç тутине çухатать.

Пан улми карçинккине хулăн полиэтилен миххе лартсан лайăх упранать. Миххе кантрапа çыхмалла. Йĕркене пăхăнсан çимĕçĕн тути те сыхланса юлĕ.

***Ыраш акнă хыççăн йăран çинчен çум курăк çухалать. Çак вырăнта каярахпа пахча çимĕç те лайăх çитĕнет. Анчах лаптăка тымар хурчĕ ерет. Çавăнпа та ыраша пĕр вырăна пилĕк çул иртсен çеç акма юрать.***

## Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил. Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм, Васка, çырăнса ил!

ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 12.09 | 13.09 | 14.09 | 15.09 | 16.09 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, $^0C$ | 2-4 сехетре | +9 | +9 | +4 | +4 | +6 |
| | 14-16 сехетре | +20 | +20 | +12 | +14 | +13 |
| Çумăр çăвать | | – | [дождь] | – | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 758 | 752 | 756 | 753 | 750 |

## КĔСКЕН

**ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин ĕçченĕсем сывлăха çирĕплетес тĕлĕшпе Атăл хĕрринче мероприяти ирттернĕ. Малашне вара çак тытăмра ĕçлекенсем ГТО нормативне пурнăçлассишĕн вăй виçĕç.**

**Министерствăра çитес вăхăтрах ирхи зарядка та йĕркелесшĕн.**

**Республикăри клиника больницинче «ВИЧ СПИДпа инфекци чирĕсене асăрхасси тата вĕсемпе кĕрешесси» ăслăлăхпа практика конференцийĕ иртнĕ. Унта эпидемиологсем, инфекционистсем, участок тата çемье тухтăрĕсем хутшăннă.**

**Шупашкарти стоматологи поликлиникинче ĕçлекенсем тĕп хулари шкулсенче пулнă. Пĕрремĕш тата вăтам классенче сывлăх урокĕ ирттернĕ. Тухтăрсем ачасене шăл тасатмалли щетка парнеленĕ.**

**Чăваш Енре «Раççей – спорт çĕршывĕ» форум уçăлнă май Пĕтĕм тĕнчери хăвăрт утакансен кунне тата спортсменсен парадне йĕркелĕç. Старта Шупашкарта вунă пин ытла çын тухĕ.**

## ХАМА ХАМ ТУХТĂР

# Хăмла пулăшать

Ыйхă вĕçрĕ пулсан эпĕ яланах хăмлапа усă куратăп. Пучахне тататăп та пусмапа чĕркесе шкапра упратăп. Çывăрайман чухне вăл мана шăпах пулăшать те.

«Симĕс ылтăнран» минтер çĕлени те аван. Капла унăн шăрши вăраха пырĕ.

Ыйхă вĕçсен хăмларан хатĕрленĕ шĕвекпе те усă курма пулать:

1 100 грамм спирта 25 грамм хăмла ямалла, тĕттĕм çĕртре эрне лартмалла. Хушăран ăна силлесе илмелле. Сиплĕ шĕвеке кунне 2-3 хутчен пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле. Каçхине ĕçсен аванрах.

2 Вĕретнĕ пĕр стакан шыва 3 апат кашăкĕ вĕтетнĕ хăмла пучахĕ ямалла. 10 минут иртсен ăна ĕçме юрать. Хăмла шывне те кунне 2-3 хутчен пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле.

**Ирина КОНСТАНТИНОВА.**
**Куславкка районĕ.**

## ХӲТЛĔХ

# Соцпакет е укçа?

Федераци çăмăллăхĕсене тивĕçлисен 2015 çулта соцпакет е укçа илес тесен кăçалхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕччен шухăшлама вăхăт пур.

Енчен те соцпакета хирĕçлесе çырас шухăш пулсан асăннă вăхăтчен Пенси фондне каймалла. Сăмахран, халĕ вăл социаллă пулăшу вырăнне укçа илет, 2015 çулта вара тӳлевсĕр эмелпе усă курасшăн е тепĕр майлă шухăшлать. Пенсионер шухăшне улăштармасан Пенси фондне кайма кирлĕ мар.

Паян Чăваш Енре федераци çăмăллăхçисен 92 процентĕ социаллă пулăшу вырăнне укçа илет. Пенси фончĕ çулталăк пуçланнăранпа соцпакета е унăн хăш-пĕр пайне хирĕçлекен 3,5 пин ыйту илнĕ. Вĕсем уйăхри укçа тӳлевне 2013 çул вĕçĕнче тата 2014 çулта тивĕçнисем. Çăмăллăха тивĕçекенсенчен вара 300 ыйту йышăннă.

Соцпакет виçĕ пайран тăрать: тӳлевсĕр эмел, санаторипе курорт тата транспорт. Соцпакетпа та, унăн уйрăм пайĕпе те усă курма пулать.

Хальхи вăхăтра соцпакет хакĕ уйăхра 881 тенкĕ те 63 пуспа танлашать, çав шутран медицина пайĕ (тухтăр рецепчĕпе тӳлевсĕр эмел) – 679 тенкĕ те 05 пус, санаторипе курорт пайĕ (тухтăр сĕннипе санаторире сиплenмелли путевка) –105 тенкĕ те 05 пус, транспорт пайĕ (хула çывăхĕнчи пуйăспа тӳлевсĕр çӳресси, санаторие çăмăллăхпа кайса килесси) – 97 тенкĕ те 53 пус.

Чăваш Енре паян 108 пин федераци çăмăллăхçи, вĕсенчен ытларахăшĕ (88 пин) – инвалид. Федераци çăмăллăхçисен йышне Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисем тата ытти вăрçă ветеранĕсем, тăлăха юлнă салтак арăмĕсем, радиаци инкекне сирме хутшăннă çынсемпе ытти категори граждансем кĕреççĕ.




## ЫЙТУ – ХУРАВ

# Çимĕçĕ те, сĕткенĕ те усăллă

**? Кăçал пан улми ăнса пулнăран хĕле валли сĕткен хатĕрлеме шухăш тытрăм. Çак çимĕç юнри холестерин шайне чакарнине илтнĕччĕ. Сĕткенĕ организмшăн пан улми пекех усăллă-ши?**

**Валерий ИВАНОВ. Муркаш районĕ, Çатракасси ялĕ.**

Пан улми сĕткенĕ те питĕ усăллă. Вăл юн пусăмне, сахăр шайне чакарать. Çавăн пекех организмри çăва ирĕлтерме пулăшать. Унсăр пуçне юнри «сиенлĕ» холестерин шайне пĕчĕклетет. Ку тĕлĕшпе ытларах симĕс пан улми сĕткенĕ усăллă. Тĕпчев кăтартăвĕ тăрăх – сиплĕ çак ĕçме «усăллă» холестерин шайне те ӳстерет. Вăл вара юн тымарĕсене çу çăмаккисенчен тасатать.

## УСĂ КУРМА

# Сиплĕ кавăн

Кавăн – чи пысăк çитĕнекен пахча çимĕç. Вăл тутлă та, усăллă та. Унра 12-14 процент (хăш-пĕр сортра 20 процент таран) сахăр, фосфор, тăвар, магни, тимĕрпе кали пур. Кавăнран пĕçернĕ апат-çимĕçе çын организмĕ лайăх йышăнать. Вăл нихăçан та вар-хырăма пăсмасть. Çавăнпа та ăна пӳрепе пĕвер чирĕсемпе аптракансене çиме сĕнеççĕ. Çавăн пекех вăл чĕре тата атеросклероз чирĕсемпе нушаланакансемшĕн, самăр çынсемшĕн те усăллă. Унăн вăрри вара – шĕвĕрĕлчене вар-хырăмран хăваласа кăлармалли чи лайăх хатĕрсенчен пĕри. Вăл ӳслĕкпе пĕвер чирĕсенчен те лайăх.

Хăш-пĕр çын шăк тухманнипе асапланать. Ун пек чухне кунне пĕр-икĕ хутчен кавăн пăтти е нимĕрĕ çимелле. Кавăнра кали нумай пулни организма пухăннă ытлашши шыва тула хăвалать.

Дынькăпа тата арпуспа танлаштарсан çак пахча çимĕç пуш-ака уйăхĕсемччен лайăх упранать.



*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*


РоссельхозБанк

# Ипотека «12/12/12»

от 12% годовых в рублях

Акция «12/12/12» действует с 06.08.2014 до 01.11.2014. Ипотечный кредит предоставляется физическим лицам в рублях РФ сроком не более 12 лет, от 12% годовых, при первоначальном взносе не менее 12% от стоимости приобретаемой квартиры. Сумма кредита – от 100 тыс. рублей до 20 млн рублей. Ставка действует при условии оформления договора страхования жизни и здоровья. В случае отказа от страхования жизни и здоровья, а также при несоблюдении принятого на себя обязательства по обеспечению непрерывного страхования жизни и здоровья в течение всего срока действия кредитного договора, ставка увеличивается на 3,5% годовых.

**Адреса офисов в г.Чебоксары и г. Новочебоксарск:**
**Пр. 9-й Пятилетки, д.5, тел.: 50-01-48**
**Президентский б-р, д. 31, тел.: 66-22-06**
**Московский пр-т, д.34/2, тел.: 58-80-02**
**Винокурова, 56, тел.: 78-20-82**

**ОАО «Россельхозбанк»**
**8 800 200-02-90 | www.rshb.ru**
Звонок по России бесплатный

Подробности по телефону 8 800 200-02-90, на официальном сайте www.rshb.ru и в офисах ОАО «Россельхозбанк».

Генеральная лицензия Банка России № 3349 (бессрочная). Реклама



## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6. Песок,** гравмассу, **чернозем,** торф, щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**9. Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – дёшево. Д-ка. Т. 89033583021.

**11. Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозем.** Дешево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 8-927-861-75-89, 8-937-381-05-85.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**15. Кирпич, КБ, брусчатку, кольца**. Т. 89613393363.

**19. Гравмассу, песок, керамзит.** Т. 8-903-322-57-66.

**20. Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы, **кровля, обшивка** домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74. metalservis21.ru

**23. Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Доставка. Тел. 89061355241.

**28.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**

**33. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**47. Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **кирпич.** Д-ка. Т.: 489277, 89033899038.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53. ОТРУБИ, ЗЕРНО, К/КОРМ**. Д-ка. Т. 89613412236.

**55.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.

**58. Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит, чернозем.** Д-ка. Т. 89276687015.

**77. ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**117. ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые окна, железные двери. Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХŸТЛĔХ

ТĔПЕЛ



## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Сыр яшки

Чăх ашне (500 грамм) 3 литр шыва ямалла, тăвар, пăрăç хушмалла та пĕçермелле (20 минута яхăн вĕретсе). Пиçсе çитсен турилкке çине кăларса хумалла.

Вĕренĕ шыва рис (150 гр) ямалла, 10 минут пĕçермелле. Сухана (150 гр) вĕттĕн турамалла. Кишĕре (150 гр) вĕтĕ шăтăклă теркăпа хырмалла. Çĕр улмине (400 гр) шуратнă хыççăн тăваткалласа турамалла. Аша пысăках мар татăксем туса касмалла.

Çĕр улмине, суханпа кишĕре вĕрекен шыва ямалла, 5-7 минут пĕçермелле. Ун хыççăн аш хушмалла, çĕр улми пиçиччен вĕретмелле.

Ирĕлекен сыр (400 гр) хушсан яшкана лайăх пăтратмалла та çулăм çинчен илмелле. Турилккене ярсан ешĕл курăкпа техĕмлентермелле.

### Пулă ăшлă çĕр улми

Çĕр улмипе (ытла вĕтĕ мар 8-10 штук) кишĕре (1 штук) тасатмалла, турамалла, пĕçермелле. Вĕретнĕ шыва тăкмалла, нимĕр тумалла, услам çу (2 апат кашăкĕ) тата 1 çăмарта хушмалла. Пуçлă сухана тасатса вĕтетмелле. Симĕс сухана çуса типĕтмелле те вĕттĕн турамалла. Çуне юхтарса кăларнă шпрота (тĕтĕмлесе çупа консервланă вĕтĕ пулă – 200 грамм) савăта ямалла, вилкăпа пусса çăрмалла. Пуçлă тата симĕс сухан, укроп, петрушка хушса пăтратмалла.

Çĕр улми нимĕрĕнчен 4,5 см сарлакăш çаврашкасем йăваламалла. Вĕсен варринче шăтăк тумалла, ăшлăх хатĕрленĕ хутăша унта 1 чей кашăкĕ чухлĕ хумалла та хĕррисене çыпăçтармалла.

Кашни çаврашкана çăнăх (1,5 апат кашăкĕ) çинче йăваламалла, çу çинче хитре хĕрлĕ тĕс çапиччен ăшаламалла.

### Кăмпа салачĕ

Кăмпана (100 грамм маринадланă кăмпа), ветчинана (200 гр), çĕр улмипе (пĕçернĕ 4 çĕр улми) хăяра (1 чĕрĕ хăяр) пĕр пек татăксем туса турамалла та пăтратмалла. Хăймана (1 стакан) уксус (апат-çимĕçре усă курмалли), горчица, сахăр, тăвар хушмалла. Çав хутăшпа маларах хатĕрленĕ çимĕçе тутлăлантармалла. Апат сĕтелĕ çине лартсан салата çăмартапа помидор турамĕсемпе, ешĕл те техĕмлĕ курăкпа илемлетмелле.

### Шалча пăрçинчен

1 кило шалча пăрçине (фасоле) лайăх пĕçермелле, 3 кило хĕрлĕ помидор (тăваткалласа туранăскер), 500 грамм пылак пăрăç (вăрăммăн туранăскер), 500 гр кишĕр (шултра теркăпа хырнăскер), пĕр ывăç петрушка (вĕтĕ туранăскер), çур стакан пусарса нимĕрленĕ ыхра, 1 стакан тип çу, 2-шер кашăк тăвар тата сахăр хушмалла.

Пурне те пĕрле пăтратса вăйсăр çулăм çинче 40 минут пăшăхламалла. Унтан стерилизациленĕ вĕри банкăсене ямалла, тимĕр хупăлчапа витмелле, сивĕниччен банкăсене ăшă япалапа хупăрламалла. Хĕлле çиме аван апата нŷхрепре упрамалла.



# Пан улми мармелачĕ

**? Кăçал пахчара пан улми ăнса пулчĕ. Унран мармелад хатĕрлениие илтнĕччĕ. Килте çапла тума пулать-и?**

– Паллах, – хаваспах паллаштарать хăйĕн рецепчĕпе пирĕн хаçата юратса вулакан Екатерина Трифонова.

– Эпĕ мармелада антоновка пан улминчен хатĕрлеме кăмăллатăп. Маншăн унăн шăрши асамлă тата унра организмшăн усăллă пектин нумай. Хатĕрленĕ хушăра мармелад тути тата лайăхланать. Импĕр (имбирь) хушма юрататăп, вăл хитре тĕс парать. Сахăрпа усă курмастăп, кăшт пыл яратăп.

Пан улмине (8-10 порци валли 2 кило) хуппинчен тасатмалла, варрине кăлармалла, анчах каяшсене пăрахмалла мар – пысăках мар кастрюле хумалла та кăшт шыв ямалла. Вăйсăр çулăм çинче 40-50 минут вĕретмелле (кастрюль хупкăчне витсе). Унтан ала витĕр сăрăхтарса çăрмалла. Çапла майпа çăра нимĕр пулать, вăл пектинпа пуян. Çавăнпа ăна пектин концентрачĕ теме пулать.

Концентрата туранă пан улмипе хутăштармалла. Вăйсăр çулăм çинче (унсăрăн пан улми çунса савăт тĕпне ларать) вĕреме кĕртмелле, пан улми çемçеличчен 20 минута яхăн пĕçермелле. Нимĕре алара сиктермелле, çăрмалла е якаличчен блендерпа çавăрттармалла. Кăшт импĕр хушмалла та каллех вăйсăр çулăм çинче çăраличчен пĕçермелле. Нимĕрĕн кастрюль тĕпĕнчен уйрăлмалла. Çапла пултăр тесен 1 сехет ытла пĕçермелле.

Тимĕр ывăç çине хут сармалла, духовкăна 70 градус таран хĕртмелле. Пан улми нимĕрне пыл е хăмăр сахăр хушмалла, пăтратмалла. Çăра нимĕре 1,5 см хулăнăш сийпе тимĕр ывăç çине юхтармалла. Кăмăл пулсан мăйăрпа илемлетме юрать. Ывăса духовкăра темиçе сехет тытмалла. Хытса çитнĕ нимĕр хутран çăмăллăн уйрăлсан – мармелад хатĕр. Анчах çакăн хыççăн та ăна пĕр талăка хăвармалла: унăн уçă сывлăшра тĕппипе типсе çитмелле. Хатĕр мармелада хачăпа тăваткал татăксем туса касмалла. Кашни татăк варрине аçтăрхан мăйăрĕ пулсан пушшех хитре курăнать.

## ПĔЛЕТĔР-И?

✓Компотăн çŷлти сийĕ тĕттĕмленсен банкăна уçăр та хуралнă çырласене кăларса пăрахăр, ыттисене хăварăр. Банкăна тепĕр хут стерилизацилĕр те (темиçе минут вĕрекен шывра тытса) виткĕчпе хупăр. Çĕнĕрен консервланă сĕткенпе хăвăртрах усă курма тăрăшăр.

✓Компотри сĕткен пăтранчăкланнине асăрхасан банкăна тŷрех уçмалла та çимĕçпе усă курмалла.

✓Банка виткĕчĕ çŷлелле тăртанса тăрсан е тапса тухсан, çимĕç пăнтăхланнă пулсан консервăпа усă курмалла мар.

✓Енчен те пур çырла та çŷлте пухăннă, сĕткен банка тĕпне юлнă пулсан савăта çĕнĕрен стерилизацилемелле (пĕрремĕш хут тытнинчен вăрахрах). Çакăн хыççăн сĕткен пĕр пек саланать.

✓Чие çырлинчен, хурлăханран, хура çырларан хатĕрленĕ компот тĕсĕ вăхăт иртнĕçемĕн улшăнать. Пит кулянма кирлĕ мар, банкăн тăхлан виткĕчĕ çырласен тĕс паракан пайĕпе хутăшнăран çапла пулса тухать. Анчах малашне консервланă чухне лак виткĕчсемпе кăна усă курăр.

САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"

УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ СЕЛА!

Санаторий "Надежда" желает Вам здоровья, долголетия и приглашает на

ОСЕННИЕ СКИДКИ.

Только с 1 сентября по 31 октября 2014 г. стоимость санаторно-курортной путевки – 10 дней:

"Стандарт" – 18000 руб.,

"Пенсионер" – 16500 руб.

К ВАШИМ УСЛУГАМ: ● высококвалифицированный персонал, ● современное оборудование, ● уникальные методы лечения различных заболеваний, ● сауна 2 раза в неделю, ● ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.

Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.

Спешите, количество мест ограничено!

Реклама

Лицензия ЛО-21-01-000816 от 14.02.2013 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики

ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ, ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

## ЧИПЕРЛЕНЕР-И?

**Ĕлĕк-авал Çĕр çинче парфюмерипе химипромышленноçĕ пулман. Анчах хĕрсемпе арăмсен илемленес килмен тетĕр-и? Йăнăшатăр. Вăл вăхăтра ырă чунпа лартса ŷстернĕ таса çимĕç яланах ал айĕнче пулнă, унпа усă курнă та.**

● Ŷт илемне, черченлĕхне упрас тесен çур стакан шурă риса вĕри шыва ярса пĕçеретпĕр. Вĕренĕ шыва тăкмастпăр, вăл кирлĕ пулĕ. Риса çăвательпăр, 2 стакан вĕри шыв яратпăр та лайăх çăратпăр. Сивĕнсен хулăн сийпе пит тата мăй çине хуратпăр. 15-20 минутран маскăна илетпĕр, ăшă шывпа çăвăнатпăр. Рис пĕçернĕ шывпа та 3 кун çăвăнатпăр. Çак меслетпе икĕ уйăхра пĕрре усă курмалла.

● Ŷте тасатма, илемлетме чăхăн чĕрĕ çăмартине кăпăклаиччен лăкатпăр. 1 чей кашăкĕ олива çăвĕ тата 5-7 тумлам лимон сĕткенĕ хушатпăр. Пите сĕретпĕр. 20 минутран çуса яратпăр.

## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРŸСЕМ

### ПРОДАЮ

**177. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**221. ПРОФНАСТИЛ,** металлочерепицу, металлосайдинг, водостоки, пластиковые окна – доставка. Замеры. **Строительство.** Т. 89196534368.

**265. Гравмассу,** песок, **щебень, бой кирпича,** асфальтную крошку, торф, чернозем, глину. Уч. ВОВ, пенсионерам – скидки. Без вых. Т. 8-919-656-77-52.

**272.** Пластиковые **ОКНА, ТЕПЛИЦЫ** 3х4; 6; 8; **обшивка домов** сайдингом. Т. 89276685310.

**310.** Канашский керамический **кирпич, гравмассу, песок, щебень,** навоз. Тел. 8-909-302-09-58.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** торф, асфальтную крошку, **бетон,** раствор. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**450. КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**550. Гравмассу, песок** речной, **щебень.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**583. Гравмассу, песок, торф, щебень.** Т. 89050282225.

**586. Доски необрезные** 25 мм, хвоя, 4 м – в Цивильске по 4000 руб. куб. м. Т. 89279993757.

**587. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната. **Скидки.** Т. 8-927-667-62-02.

**591. МЕД цветочный с собственной пасеки** с доставкой. Т.89279903070.

**603. Дизельное топливо** по 26 р. Д-ка платная. Т.: 388012, 89196529616.

**618. Копалки,** сортировки, **плуги,** дискаторы, разбрасыватели. Дешево. ДОСТАВКА! Т. 8-937-955-98-02.

### КУПЛЮ

**433. Коров.** Т. 89278508564.

### СУТАТĂП

**580. ÇУРТ.** Элĕк р-нĕ, Вылпасар. Т. 8-927-857-23-54.

### РАБОТА

**604. МОНОЛИТЧИКИ в Москву.** Т. 8-966-108-22-36.

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, авăн уйăхĕн 15-мĕшĕ**
6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Символ веры. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Радиовулав. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Библи калавĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**
6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытлари кун, авăн уйăхĕн 16-мĕшĕ**
6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 19.20-20.00, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.20 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.10-18.30 Вырма дневникĕ. (12+) 18.30-19.00 Чăваш Ен, Çулсем тата çынсем. (12+) 19.30-20.00 На Олимпе. (12+) 20.30-21.00 Открытый регион. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, авăн уйăхĕн 17-мĕшĕ**
